Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

64 (8025) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи çурла (август) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Вырма – 2012

## Иккĕмĕш эрне çĕнтерӳçи

***Çумăр çунине пăхмасăр ĕнерхи куна тĕш тырă культурисене районта пурĕ 5562 гектар (41 процент) çинчен пухса кĕртнĕ. «ВаСем» общество вырмана вĕçленĕ.***

***Вырмана хутшăнакан механизаторсем хушшинчи ăмăртăвăн иккĕмĕш эрнинче Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Болеслав Никитин ертсе пыракан экипаж çĕнтернĕ, çакна çирĕплетекен сертификата тивĕçнĕ. Палăртма кăмăллă, пултаруллă та тăрăшуллă механизатор çулсеренех тухăçлă ĕçпе палăрать.***




**Р. Илларионова сăн ӳкерчĕкĕ.**

Хак пани

## Эффективлăх енĕпе – малтисенчен пĕри

РФ регионсен аталанăвĕн министрĕ О. Говорун çĕр-шыв правительствин ларăвĕнче 2011 çулта регионсен ĕç тăвакан влаç органĕсен ĕçĕн эффективлăхне хакланин статистикипе паллаштарнă. Чăваш Ен 4-мĕш вырăн йышăннă. Малта – Тутарстан, Санкт-Петербург тата Тюмень облаçĕ.

Çапла вара, «Бизнес-ТАСС» агентстви хыпарланă тăрăх, лидера тухнă 10 регион валли 1 миллиард тенкĕлĕх патшалăх дотацийĕ уйăраççĕ. Министр çавна уçăмлатнă. Кашни регион валли дотаци уйăрнă чухне эффективлăх шайне комплекслă хакланин виçине шута илеççĕ, вăл вăтам шутпа 70 миллионран тытăнса 160 миллион тенкĕпе танлашать.

О. Говорун çавна аса илтернĕ: хаклав виçине 4 сферăри 74 кăтартупа палăртнă. Кусем вĕсем патшалăх управленийĕ, вĕрентӳ, сывлăха сыхласси тата пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăх. Кунта ĕç кăтартăвĕсене тата вĕсене çынсем мĕнле хак панине те, укçа-тенкĕпе эффективлă усă курнине те шута илнĕ.

Министр пĕлтернĕ тăрăх малашне ĕç эффективлăхне 74 енпе мар, 11 енпе хакласа палăртĕç, анчах та вĕсем уйрăмах пĕлтерĕшлĕ пур сферăсемпе те çыхăнса тăрĕç.

Аса илтеретпĕр: 2010 çул итогĕсемпе эффективлăхăн асăннă рейтингĕнче Чăваш Ен 7-мĕш вырăн йышăнса 104 миллион тенкĕ премие тивĕçнĕччĕ.

Паян – Раççей Патшалăх ялавĕн кунĕ

## Виçĕ тĕслĕ ялав – çĕнĕ самана палли

Çуллен августăн 22-мĕшĕнче пирĕн çĕр-шывра Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунне уявлаççĕ. Ăна РФ Президенчĕн 1994 çулхи августăн 20-мĕшĕнчи 1714 № «Раççей Федерацийĕн Патшалăх ялавĕн кунĕ çинчен» Указĕпе килĕшӳллĕн палăртаççĕ.

1991 çулхи августăн 22-мĕшĕнче Мускавра Шурă çурт çинче виçĕ тĕслĕ Раççей ялавне пĕрремĕш хут официаллă çĕкленĕ. Вăл унччченхи патшалăх символне – çурлапа мăлатуклă хĕрлĕ ялава улăштарнă. Çав кун РСФСР Аслă Совечĕн чрезвычайлă сессийĕнче виçĕ тĕслĕ ялава официаллă йĕркепе наци ялавĕ тесе йышăннă, ятарлă йышăну кăларнă.

Чи малтан виçĕ тĕслĕ ялава Алексей Михайлович патша вăхăтĕнче «Орел» ятлă çар карапĕ çинче çĕкленĕ. Карапа 1668 çулта Голланди инженерĕ Давид Бутлер тунă.

Пĕрремĕш Петĕр патшана виçĕ тĕслĕ ялавăн «ашшĕ» теççĕ. 1705 çулхи январĕн 31-мĕшĕнче (20) вăл ятарлă указ кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн сутуилӳ тăвакан пур карап çинче те шурă-кăвак-хĕрлĕ ялав çĕклемелле пулнă. Ялав тĕслĕхне патша хăй ӳкернĕ, тĕсĕсене те хальхи йĕркепе вырнаçтарнă.

Апла пулин те официаллă статуса ялав 1896 çулта çеç тивĕçнĕ. Иккĕмĕш Николая патшана лартас умĕн Юстици министерстви шурă-кăвак-хĕрлĕ ялав кăна наци ялавĕ шутланать тесе пĕлтернĕ.

1918 çулта Яков Свердлов пуçарнипе большевиксем виçĕ тĕслĕ ялава революцилле хĕрлĕ ялавпа улăштарнă. 1991 çулхи августăн 22-мĕшĕнче вара Раççей парламентарийĕсем виçĕ тĕслĕ ялава каялла таврăнă.

Ял хуçалăхĕ

## Çĕнĕ техника туяннă

Машинăпа трактор паркне пысăк вăй-хăватлă техникăпа çĕнетни тухăçлă ĕçлеме тата тăкак шайне пĕчĕклетме май парать. Çакна тĕпе хурса ку енĕпе районта çулсеренех тĕллевлĕ ĕçлеççĕ. Пысăк тупăш илессинче вара çĕнĕ технологипе тата техникăпа усă курни пĕлтерĕшлĕ.

Çулталăк пуçланнăранпа районти агропромышленность комплексĕнче вăй хуракан предприятисем 45 единица чухлĕ ял хуçалăх машинипе оборудовани туяннă, ăна валли 46, 9 миллион тенкĕ тăкакланă. Çĕнĕ техника шутĕнче 13 трактор, тырă пухса тирпейлемелли 4 комбайн тата ытти ял хуçалăх машинисем.

Техникăна çĕнетессинче "Путь Ильича" ООО АФ, "ВаСем" ООО, "Передовик", "Герой" ял хуçалăх предприятийĕсем ытларах тимлеççĕ. Уйрăмах "Путь Ильича" АФ энергие перекетлеме май паракан техникăна кăмăллани курăнать.

Иртнĕ çул вара ял хуçалăх тĕлĕшпе усă курмалли 71 техника тата инвентарь туянма 75, 5 миллион тенкĕ тăкакланă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Кĕскен

## Ял хуçалăхне аталантарма

«Агропромышленноç комплексне аталантарасси» наци проектне тата ку тĕлĕшпе 2006 – 2012 çулсем валли палăртнă патшалăх программине пурнăçа кĕртес тĕллевпе «Россельхозбанк» ОАО Чăваш Енре 89 инвестици проектне пĕтĕмпе 2,648 млрд тенкĕлĕх финанслană.

Инвестицисен 65,6 процентне малта пыракан технологипе ĕçлекен хальхи çĕнĕ объектсем çĕклеме уйăрнă.

Раççейĕпе асăннă банк ял хуçалăхне 201,1 млрд тенкĕ инвестици хывнă.

Республикăра

## Юбилейсене хатĕрленсе

Республика пуçлăхĕн администрацийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх Михаил Игнатьев Шупашкара никĕсленĕренпе 550 çул, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлама хатĕрленес ыйтупа ĕç ушкăнĕн пĕрремĕш ларăвне ирттернĕ.

Ларура юбилейсене хатĕрленсе ирттерме йĕркелӳ комитетне çирĕплетме тата тĕллевлĕ программа хатĕрлеме йышăннă. Республикăри ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе пĕрле тĕп мероприятисен планне хатĕрлеме хушнă. Уява хута яма палăртакан объектсен списокне те тăратмалла.

Михаил Игнатьев çак сумлă юбилейсене хатĕрленсе ирттерни хуласемпе ялсен сăн-сăпатне лайăх енне улăштарма май памаллине палăртнă.

## Шупашкар хăна-вĕрле пуçтарчĕ

Вырсарни кун Шупашкар хули 543 çул тултарнине уявларĕ. Паллă юбилейччен вăхăт нумаях юлмарĕ те хальхи уяв унăн анлă репетицийĕ евĕр иртрĕ.

Уявăн тĕп вырăнĕ «Пултарулăх бульварĕ» пулчĕ. Кунта, Наци библиотеки патĕнчен пуçласа залив таранах, пĕр вăхăтрах ташларĕç, юрларĕç, ӳкерчĕксем ӳкерчĕç, пăт пуканĕсем йăтрĕç тата ытти те.

Çеçпĕл Мишши палăкĕ умĕнче чăваш интеллигенцийĕ пуçтарăнчĕ. Кунта сăвăсем вуларĕç. «Уяв» ансамбль хăйĕн юрри-кĕввипе илем кӳчĕ. Уяв хăни Михаил Игнатьев хăй те Çеçпĕл хайланă йĕркесене хăпартланса вуларĕ.

Уяв Хĕрлĕ лапамра вĕçленчĕ. Республика пуçлăхĕ уявпа саламласа Шупашкарсем малашлăха ĕненнине, илемлĕ хулара пурăнасшăн пулнине, вĕсем ĕçлеме пултарнине палăртрĕ.

Районта

## Ачасене – ыр кăмăллăх пулăшăвĕ

Сентябрĕн пĕрремĕшĕччен пирĕн районта «Шкул портфелĕ ăшне – ырăлăх» ятпа ыр кăмăллăх акцийĕ иртнине маларах пĕлтернĕччĕ.

Ăна ирттерессипе район администрацийĕ çумĕнчи ачасене тата вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси тимлет. Унтан пĕлтернĕ тăрăх район администрацийĕн финанс пайĕ малтанхи кунсенчех лайăхпа палăрма ĕлкĕрнĕ: специалистсем шкула каякансем валли ӳкерчĕк тумалли альбомсем, тетрадьсем тата ытти канцтаварсем туянса панă. Кунсăр пуçне шкула кайма çи-пуç илсе килекенсем те, ытти хатĕрсемпе пулăшакансем те тупăннă.

Аса илтеретпĕр, çĕнĕ е усă курнă, анчах та вĕренме юрăхлă кĕнекесем, çыру тетрачĕсем тата çакна майлă ытти кĕнеке-тетрадьпе канцеляри хатĕрĕсем пур пулсан вĕсене район администрацийĕн 120-мĕш пӳлĕмне илсе пыма пултаратăр. Япаласене сентябрĕн 1-мĕшĕччченех йышăнаççĕ. Вĕсене районти йывăр лару-тăруллă, сахал тупăшлă, ăнăçсăр çемьесенчи ачасене парса пулăшаççĕ.

Республикăри «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕн счечĕ çине пĕлтĕр пирĕн районтан 83 пин тенкĕ куçарнă пулнă. Çак суммăпа халĕ, шкула каяс умĕн, районти 120 ачана пулăшаççĕ. Спорт костюмĕсем тата канцеляри таварĕсем туянма документсем хатĕрлесе çитернĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Поздравляем

**Коллектив МУП ЖКХ «Моргаушское» сердечно поздравляет главного инженера ФОМИНА Виктора Витальевича, проработавшего на предприятии более 15 лет, с юбилеем.**

50 – не праздник старости,
Пусть не чувствует сердце
усталости.
Это зрелость во всем и
всегда,
Это опыт большого труда.
Это возраст совсем
не большой,
Ежели не стареть душой.
Счастья Вам полную чашу,
За труд и отзывчивость
Вашу.

Çырăнтару – 2012

## Хаклă вулаканăм!

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата сентябрь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Вулакансене пĕлтернĕччĕ, июль уйăхĕнчен шăмат кунсенчи кăларăм 8 страницăпа тухма пуçларĕ.**

# Ачасен пултарулӑхне шута хурса ӗҫлемелле

Педагогсен августри конференцийӗ умӗн

***Педагогсен августри конференцийӗ районта кӑҫал ҫитес эрне кун, августӑн 24-мӗшӗнче, Юнкӑри вӑтам шкулта иртет. Ун умӗн эпир район администрацийӗн вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин пайӗн пуҫлӑхӗпе З. ДИПЛОМАТОВӐПА тӗл пулса калаҫрӑмӑр.***

**– Зоя Юрьевна, педагогсен августри конференцийӗнче калаҫу, тӗпрен илсен, мӗн пирки пырӗ тата вӑл мӗнпе ҫыхӑннӑ?**

– Конференцин тӗп ыйтӑвӗ – вӗрентӳ пахалӑхне ӳстерни урлӑ пултаруллӑ ачасемпе ӗҫлессин системине туса хурасси. Ытлари кун Шупашкарта иртнӗ республикӑри педагогсен конференцийӗ те ҫак ыйту таврах пулчӗ.

Пултаруллӑ ачасемпе ӗҫлесси, вӗсене хавхалантарасси пирки федераци шайӗнче кӑҫал уйрӑмах чылай тӗплӗ калаҫу пулса иртрӗ. Апрель уйӑхӗнче акӑ Раҫҫейре пултаруллисене тупса палӑртассин пӗтӗмӗшле наци системин концепцине йышӑннӑччӗ. Кунсӑр пуҫне халӗ пурнӑҫланакан Президент пуҫарӑвӗн «Пирӗн ҫӗнӗ шкул» программин те пӗр енӗ пултаруллӑ ачасемпе ӗҫлессипе ҫыхӑннӑ.

**– Паянхи кун пултаруллӑ ачасене, ҫамрӑксене хавхалантарасси япӑх мар шайра темелле.**

– Пирӗн республикӑра пултаруллӑ ачасемпе ҫамрӑксене хавхалантарас тӗллевпе ятарлӑ стипендисем, премисем парассине ҫирӗплетсе хунӑ ӗнтӗ. Район шайӗнче те пултаруллисем валли район администрацийӗн пуҫлӑхӗн стипендине ҫирӗплетнӗ. Шкулсенче те хавхалантару мелӗсене палӑртнӑ. Анчах та ҫак пултаруллӑ ачасемпе ӗҫлемелли системӑна туса хумалла.

**– Шкулсенче пултаруллӑ ачасемпе уйрӑммӑн ӗҫлекенсем пурах пулӗ?**

– Паллах пур. Анчах та каласа хӑвармалла – кашни шкулти кашни вӗрентекен мар. Вӑхӑт вара паян ачан аталанӑвне, пултарулӑхне шута хурса кашнинпе уйрӑммӑн ӗҫleme ыйтать. Ҫапла вара шкулччен хи вӗрентӳ учрежденийӗнче е тата пуҫламӑш шкулта вӗреннӗ чухне ачан пултарулӑхне тупса палӑртсассӑн кайран ачана хӑйне те, вӗрентекенсене те ҫӑмӑлрах пулмалла. Ача пур енлӗн пӗр пек пултаруллӑ пулма пултараймасть-ҫке-ха: пӗри гуманитари енӗпе питӗ пултаруллӑ, тепри – пулас математик, виҫҫӗмӗшӗ – пулас спортсмен тата ытти те. Пуринпе те хӑйне май ӗҫлемелле.



**– Пытарма кирлӗ мар, нумай шкулта олимпиадӑна хӑш ачана хатӗрлемеллеши, пултарулӑх конкурсне кама явӑҫтармалла-ши текен ыйтусем час-часах тухса тӑраҫҫӗ...**

– Ҫапла, кун пек тӗслӗхсем пӗрре мар тӗл пулаҫҫӗ. Нумай мероприятире пӗр ачасенех курма тӳр килет. Анчах та пур шкулта та лару-тӑру пӗр пек мар. Тӗслӗхрен, Муркаш, Мӑн Сӗнтӗр, Йӳҫкасси, Оринин, Турай, Шатракасси шкулӗсенче ҫулсеренех олимпиадӑсен, ытти конкурссен ҫӗнтерӳҫисене хатӗрлеме пултаракан вӗрентекенсем тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсене район шайӗнче те лайӑх пӗлеҫҫӗ: В. Львов, Е. Михайлова, И. Семенов, В.Тихонов, В. Алексеева, Г. Смирнов, А. Герасимова, В. Иванова тӗллевлӗ ӗҫлесе пыраҫҫӗ.

Ачасен пултарулӑхне тӗрлӗ енлӗн аталантарассинче районти хушма пӗлӳ паракан учрежденисенче вӑй хуракан тата вӗсемпе тачӑ ҫыхӑнура ӗҫлекен педагогсен тӳпи те пысӑк. Л. Митрофанова, Ю. Самушков, И. Киршева, Т. Ермакова, Э. Гордеев, П. Васильев, С. Черкашин, В. Моисеев тата ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗн ытти тренер-преподавателӗсен ӗҫӗ курӑмлӑ. Районти пилӗк коллектив – тӗслӗх коллективсем: Ҫатракассинчи «Журавушка», Юнкӑри «Калейдоскоп», Муркашри «Вдохновение», Москакассинчи «Калинка» тата Нискассинчи «Подсолнушек».



**– Ача сачӗсенче тата пуҫламӑш шкул – ача сачӗсенче ку тӗлӗшпе ӗҫ-пуҫ мӗнлерех?**

– Ача сачӗсенче иртекен ӑс-тӑн конкурсӗсем, спорт ӑмӑртӑвӗсем тата ытти енсемпе, сӑмахран, тӑван ен культурипе тата историйӗпе е, калӑпӑр, экологи енӗпе, тарӑннӑн ӗҫлени пултаруллӑ ачасене тупса палӑртма пулӑшать.

Анчах та тепӗр хут калатӑп: пултаруллӑ ачасемпе ӗҫлеме система туса хумалла, унпа пӗрлех – вӗрентӳ пахалӑхне те ӳстермелле. Конференципе кун пирки, паллах, ӗҫлӗ те тӗплӗ калаҫу пулӗ.

**– Апла ку ыйтӑва кӑшт хыҫарах хӑварса вӗренӳ ҫулӗ пуҫламӑшӗ патне таврӑнар. Пур вӗрентӳ учрежденийӗ те ачасене йышӑнма хатӗр-и паян?**

– Паянхи куна районти пур вӗрентӳ учрежденийӗ те ачасене йышӑнма хатӗр. Комисси пурне те йышӑннӑ.

**– Нумаях пулмасть районти шкулсенче вӗрентекенсем ҫитеӗксӗр пирки асӑннӑччӗ.**

– Шел пулин те, пур вакансие те хупма май килмерӗ. Хӑш-пӗр вӗрентекенсен сехет шутне ӳстерме тивет. Юнашар вырнаҫнӑ шкулсенче пӗр вӗрентекенӗнех совместительство мелӗпе те ӗҫлеме пулать. Анчах та ҫак лару-тӑру шкул ачисем ҫинче япӑх енӗпе палӑрмалла мар. Мӗншӗн тесен вӗрентекенсен ӗҫ укҫин пӗр пайӗ – хавхалантару пайӗ – шӑпах вӗрентекенӗн тата унӑн вӗренекенӗсен пур енлӗ кӑтартӑвӗпе ҫыхӑннӑ.

**– Тавах калаҫушӑн.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сӑн ӳкерчӗксенче: шкулта та, ача садӗнче те ачасене тӗрлӗ проект ӗҫ-хӗлне явӑҫтарса вӗсен пултарулӑхне аталантараҫҫӗ.**

Ял тӑрӑхӗсенчен хыпарлаҫҫӗ

# 90 ҫул 90 кун мар

Нумаях пулмасть Мӑн Сӗнтӗрти хисеплӗ ҫынсенчен пӗри, ӗҫ ветеранӗ тата тыл ӗҫченӗ Ксения Астрова хӑйӗн 90 ҫулхи юбилейне паллӑ турӗ. Ҫак паллӑ кун ячӗпе Ксения Ивановнӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ, пай пуҫлӑхӗ Л. Тарасова, районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн пуҫлӑхӗ Н. Петрова, Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ А. Лаптев, Мӑн Сӗнтӗр райпо канашӗн председателӗ Л. Майкова саламларӗҫ.

Ксения Ивановна Пыл спасӗнче ҫуралнӑ пулин те, унӑн пурнӑҫ ҫулӗ пыл пек пылак та ҫутӑ пулайман. Иртнӗ вӑрҫӑпа ҫыхӑннӑ пур йывӑрлӑха та чӑтса иртерме тивнӗ. Чӑтнӑ, чыспа ҫынлӑх туйӑмӗсене ҫухатман.

Чурӑс чунлӑ пулман вӑл нихӑҫан та. Ку вӑл ҫынсене юратнинчен, яланах ялйышпа пӗрле пулма тӑрӑшнинчен, шанса панӑ ӗҫе чун-чӗрепе парӑннинчен килнӗ пулӗ. Шухӑшласа кӑна пӑхӑр: 72 ҫула ҫитичченех вӑл пӗрлехи ӗҫе хутшӑнма пӑрахман.

Ксения Астрова мӗн ӗмӗр тӑршшӗпех потребкооперация системинче вӑй хунӑ. Ҫав тапхӑрта складра та, сутуҫӑра та, магазин заведующийӗнче те тӑрӑшма тивнӗ.

«Кӑнтӑр апачӗ ҫиме те вӑхӑт ҫукчӗ, ура ҫинче тенӗ пекех апатланаттӑмӑр», – аса илет иртнӗ ҫулсене юбиляр. Анчах та коллективра вара пурте пӗр ҫын пек пулнӑ: яланах туслӑх хуҫаланнӑ, пӗр-пӗрне пулӑшма тӑрӑшнӑ.

Ҫакӑ та паллӑ. Ҫамрӑк ҫулсенче К. Астрова Мӑн Сӗнтӗр ял библиотекинче Екатерина Борисовна Охтеровӑпа та пӗрле ӗҫленӗ. Кӗнекесене юратасси унра яланлӑхах упранса юлнӑ. Ҫак туйӑма вӑл хӑйӗн ачисене те парнеленӗ темелле. Унӑн хӗрӗ Зинаида Васильевна – ял библиотекин активлӑ вулавҫисенчен пӗри.

Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ А. Лаптев Ксения Астровӑна юбилей кунӗ ячӗпе саламланӑ май ҫирӗп сывлӑх, пурнӑҫра ӑнӑҫу сунчӗ, вӑл тата вӗсен ӑрӑвӗ паянхи тулӑх пурнӑҫшӑн хӑйсен вӑй-халне шелleменшӗн тав сӑмахӗ каларӗ.

# Туртрӑм та ҫӗкленчӗ...

Ҫанталӑк условийӗсем меллех пулаймарӗҫ пулин те, августӑн 16-мӗшӗнче Чуманкасси ялӗн пӗви хӗррине пулӑ тытма кӑмӑллакансем пуҫтарӑнчӗҫ. Районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗ, ҫынсене социаллӑ пулӑшу паракан районти центр тата инвалидсен районти организацийӗ йӗркеленипе Чуманкасси ял тӑрӑхӗнчи инвалидсемпе пенсионерсем хушшинче пулӑ тытассипе «Ҫаклан, пулӑ, пысӑкки тата пӗчӗкки!» конкурс иртрӗ.

Конкурс итогӗсемпе В. Калугин 2,4 килограмм пулӑ тытса 1-мӗш вырӑн йышӑнчӗ. Н. Алексеев (2,2 килограмм) 2-мӗш, Л. Михайлова (1 килограмм) 3-мӗш пулчӗҫ.

Ӑмӑртусем вара пулӑ тытассипе кӑна иртмерӗҫ. Инвалидсемпе пенсионерсем шашкӑлла выляссипе, дартс енӗпе те вӑй виҫрӗҫ. Шашкӑлла выляссипе Н. Алексеева ҫитекенни пулмарӗ, дартс енӗпе В. Паргеева мала тухрӗ.

Мероприятие хутшӑннисене районти социаллӑ хӳтлӗх пайӗн пуҫлӑхӗ Н. Петрова, Чуманкасси ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗн тивӗҫӗсене вӑхӑтлӑх пурнӑҫлаканӗ Э. Новикова саламларӗҫ. Унта хутшӑннисем пурте дипломсемпе парнесене тивӗҫрӗҫ.

Конкурс вӗҫленнӗ хыҫҫӑн пурте пулӑ яшкипе хӑналанчӗҫ, кӗреке юррисем юрларӗҫ.

# Шупуҫсем ял кунӗнче савӑнчӗҫ

Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхне кӗрекен Шупуҫ ялӗнче пурӑнакансем хӑйсен ял уявне ҫулленех иртерме тӑрӑшаҫҫӗ. Кӑҫал та иртерме кӑмӑл турӗҫ ӑна. Пуҫаруҫисен депутатсен Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнчи Пухӑвӗн депутачӗ, Мӑн Сӗнтӗрти ҫыхӑну уйрӑмӗн пуҫлӑхӗ Ю. Киселева, Шупуҫ ялӗнчи клуб администраторӗ Р. Зиновьева, ялти спорт юхӑмӗн лидерӗ, васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗн уйрӑмӗн фельдшерӗ А. Ежуков пулчӗҫ.

«Мӑн Сӗнтӗрти информаципе культура центрӗ» муниципаллӑ бюджет культура учрежденийӗн директорӗ И. Зайцев «Янаш» юрӑпа ташӑ халӑх ансамблӗн агитбригадине хӑйсен илемлӗ ташши-юррипе уява хутшӑнтарассине палӑртрӗ.

Ял ҫыннисем хӑйсем те уява йӗркелесе иртерес ӗҫе активлӑ хутшӑнчӗҫ. Шупуҫ ялӗнче пурӑнакансен пӗрлехи пухӑвӗнче уяв программине, уява камсене йыхравламаллине пӑхса хучӗҫ.

Уяв сӗтелне кирлӗ шайра йӗркелеме ял ҫынисем самай тӑрӑшрӗҫ. Шӳрпе валли така туянчӗҫ, сӑра вӗретрӗҫ, кукӑль-ҫӑмах пӗҫерсе хатӗрлерӗҫ т. ыт. те.

Уяв чӑннипех хаваслӑ та илӗртӳллӗ, асра юлмалла иртрӗ. Уявра вара вӑрҫӑпа ӗҫ ветеранӗсене, тыл ӗҫченӗсене, ҫураҫупа килӗшӳпе нумай-нумай ҫул пӗрле пурӑнакан ҫемьесене те аса илсе тав сӑмахӗ калама манмарӗҫ. Ҫамрӑк ҫемьесене те палӑртрӗҫ. Ял тӑрӑхӗн пуҫлӑхӗ А. Лаптев вӗсене пурнӑҫра халӗ те активлӑ пулнӑшӑн, ялта иртterекен мероприятисенчен айккинче тӑрса юлманнишӗн, старостӑсене, депутатсене усӑллӑ та кирлӗ сӗнӳсем пама тӑхтаса тӑманнишӗн тав сӑмахӗ каларӗ. Вӗсен ячӗпе уявра кӗвӗ хыҫҫӑн кӗвӗ шӑранчӗ, юрӑсем янӑрарӗҫ.

Яш-кӗрӗм спорт ӑмӑртӑвӗсенче вӑй виҫрӗ. Кайран вара баян каласа ташласа савӑнчӗҫ, пур ӳсӗм шайӗнчисем валли те дискотека иртерчӗҫ.

Шупуҫсем ҫак уяв кунӗнче лайӑх йышӑну турӗҫ – «Чи таса та хӑтлӑ урам» ят ҫӗнсе илессишӗн ял урамӗсем хушшинче ӑмӑрту йӗркелеме килӗшрӗҫ.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**пухса хатӗрленӗ.**

Спорт

# Муркаш ентешлӗхӗ малтисен ретӗнче

Августӑн 17-мӗшӗнче «Спартак» стадионта савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура «Туслӑх кубокӗ» ятпа иртекен пысӑк ӑмӑрту вӗҫленчӗ. Ӑмӑрту программинче волейболла, мини-футболла вылясси тата канат туртасси пулнӑ.

Ку ӑмӑрту ҫулсеренех иртет. Кӑҫал вара Шупашкар хула пуҫлӑхӗн куҫса ҫӳрекен кубокне ҫӗнсе илес тесе республикӑри ентешлӗхсен 22 команди хутшӑннӑ.

Муркашсен ентешлӗхӗ ҫак ӑмӑртура кашни ҫул тенӗ пекех лайӑх кӑтартусемпе савӑнтарать: уйрӑм енсемпе те, пӗтӗмӗшле кӑтартупа та малти вырӑнсене пӗрре мар тухнӑ. Акӑ кӑҫал та пирӗн ентешлӗх команди пӗтӗмӗшле виҫҫӗмӗш вырӑна тухма пултарнӑ, спорт инвентарӗ туянма 30 пин тенкӗлӗх сертификат ҫӗнсе илнӗ. Муркаш ентешлӗхӗн командине саламласа ҫитес ҫулхи ӑмӑртура пысӑкрах ӑнӑҫусем тума сунатпӑр.

# Турнир вӗҫленчӗ

Муркаш районӗнчи командӑсем хушшинче ӗҫлекенсен спартакиади шучӗпе пынӑ мини-футболӑн пысӑк ӑмӑртӑвӗ вӗҫленчӗ. Мӗншӗн пысӑк? Мӗншӗн тесен районти 7 команда – «Оринино», «Моргауши», «Юнга», «Шатьма», «МетПласт» (Анаткасси), Мӑн Сӗнтӗр, Ҫатракасси ял тӑрӑхӗсенчи командӑсем – футболла ҫӑвӗрех вылярӗ.

Кашни команда вун икӗ вӑйӑ вылярӗ. Вӑйӑсен пӗтӗмлетӗвӗпе очкосене шутланӑ хыҫҫӑн Мӑн Сӗнтӗрсем мала тухни паллӑ пулчӗ. Вӗсем ытти командӑсен хапхине пурӗ 51 мечӗк тапса кӗртнӗ. Иккӗмӗш вырӑнта – Юнкӑсем, виҫҫӗмӗшӗнче – Муркашсем.

Хĕрÿ тапхăр

# Вырма малалла пырать

Ир тăракан тутă пулнă тенĕ евĕр вырма ĕçне маларах хатĕрленнĕ тата çак ĕçе вăхăтра пуçăннă ял хуçалăх предприятийĕсем вырма тапхăрĕн кашни саманчĕпе тĕллевлĕ, вырăнлă усă кураççĕ. Çакă эрне кунхи çул çÿревре те аван курăнчĕ. Чи малтанах вырмана ыттисенчен иртрех тухнă "Восток" хуçалăхра пулма тÿр килчĕ. Эпир пынă самантра "Енисей – 1200" комбайн анлă уйхирте ĕçлетчĕ. Çирĕм пилĕк гектарлă уйра хир карапĕн рульне тытса пыракан Сергей Наумов тыр-пул пухса кĕртес ĕçсене пахалăхлă та вăхăтлă туса иртерес тĕллевпе районта çулсеренех вырма ĕçне хутшăнакан механизаторсем хушшинче йĕркеленĕ конкурсăн иртнĕ эрнери тапхăрĕнче иккĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ.



– Çанталăк чăрмавĕсене пăхмасăр мĕн акнилартнине пухса илесчĕ, – терĕ экономикăпа АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертÿçи В. Ананьев вăхăтпа туллин усă курма сĕнсе.

Йĕтем çинче те хĕрÿ ĕç тапхăрĕ пыратчĕ. Тин кăна хиртен килнĕ машина тырă пушататчĕ. Икĕ сменăпа ĕçлекенсем михĕ хыççăн михĕ тултарса шаршанлатчĕç. Çамрăк ĕçченсем питĕ тирпейлĕ пулни курăнчĕ. Тиесе турттаракансем вара – уйрăм ушкăн.

– Вырма тапхăрĕ хаклă вăхăт пулнине шута илсе çак ĕçе хутшăнтарма юнашар ялсенчен те илсе килетпĕр, вырăна тухса апатлантарассине те йĕркелерĕмĕр, – терĕ хуçалăх ертÿçи Михаил Шишокин кунти ĕç-хĕлпе паллаштарнă май.

"ВаСем" чикĕллĕ яваплăхлă обществăра вырма ĕçĕ вĕçленсе пырать. Сарă тулă уй-хирĕнчи икĕ карап пĕр чăрмавсăр малалла ыткăнать, ахăртнех уяр кунпа туллин усă курасшăн. Юнашарах ав пăрса ани черет кĕтет тата çырма урлă вырнаçнă тепĕр лаптăк хир карапне чĕнет. Пĕр комбайнпа Етĕрне районĕнчен килнĕ Владимир Рыбаков тăрăшать, вăл асăннă конкурсра виççĕмĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Ĕçе çапла майпа хаклани унăн кăмăлне кайрĕ.

– Кăçалхи тухăç япăх мар. Халĕ вара хатĕр тырăна "Чувашхлебопродукта" турттарма пуçларăмăр, – паллаштарать кунти ĕç-хĕлпе Валерий Кондратьев.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

**Редакцирен:** Хаçата пичете хатĕрленĕ хушăра «ВаСем» обществăра вырмана вĕçленĕ.

Хурт-хăмăр отраслĕ

# Хисеп грамотипе наградăланă

**Ял хуçалăх производствинче чылай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2012 çулхи августăн 16-мĕшĕнчи 704 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:**

**– Владимир Леонидович МИХАЙЛОВА, "Герой" ял хуçалăх утарçине;**

**– Василий Николаевич НИКОЛАЕВА, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх утарçине;**

**– Виталий Геннадьевич ЯМАНГЕЕВА, Катькас ял тăрăхĕнчи уйрăм утарçăна.**

# Сиплĕ çимĕç тата юрă-кĕвĕ

Эрне кун Муркаш урамĕ юрă-кĕвĕпе тулчĕ. Кунта хурт-хăмăр ĕçĕпе кăсăкланакансем, çак отрасль продукцине туянас текенсем тата ыттисем пухăнчĕç.

Ытти çул уява иртересси республика шайĕнче пулнă пулсан кăçал вăл ансатрах иртрĕ. Çакă чи малтан хурт-хăмăр отраслĕ пысăк тупăш пама пултарайманнипе çыхăнчĕ пулĕ. Тухăç илесси, паллах, утарçăран кăна килмест, çут çанталăк пулăмĕсем те кунта пысăк пĕлтерĕшлĕ.




Çапах та тăрăшуллă утарçăсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе ыттисене паллаштарма, тутлă та сиплĕ çимĕçпе сăйлама тата сутма пултарчĕç. Уйкас Янасал тăрăхĕн ĕçченĕсем вара кăмăл тăвакансене пыл сăрипе хăналарĕç. Хурт-хăмăр ĕçĕнче уйрăмах палăрнă ĕçченсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Хисеп грамотисем парса чысларĕ.

– Çулпа çул пĕр килмест. Çитесси вара ăнăçлăрах пуласса шанас килет, – терĕ вăл кунта пухăннисене саламланă май.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен суту-илÿ точкисем туянакан ыйтăвне туллин тивĕçтерчĕç. Тепĕр тĕремре ача-пăча выляма-савăнма пултарчĕ. Культура ĕçченĕсем вара çак кун чăн-чăн уяв парнелерĕç. Илемлĕ тумлă артистсене пăхса савăнмасăр иртекен пулмарĕ.

**Р. МАКАРОВА.**

Çул-йĕр çинче

# Водительсен айăпне пула

Канмалли кунсенче çул-йĕр çинче авари тухас хăрушлăх пысăк. Апла çула тухакансен те ытти чухнехинчен тимлĕрех пулмаллине пĕлтерет çакă. Акă иртнĕ эрнере пирĕн район территорийĕнчи çулсем çинче инкек пулмасăр иртмерĕ.

Августăн 14-мĕшĕнче каçхи пилĕк сехет тĕлнелле федераллă трассăпа пыракан çăмăл машина умра пынă транспортран иртес тесе шутлать. Водитель килекен транспорт речĕ çине тухас умĕн хăрушсăрлăх пирки шутламан курăнать. Хăйĕн çăмăлттайлăхĕпе çак рет çинче вăл хирĕç килекен «Форд» маркăллă машинăпа çапăнать: транспортран иртме çул ытла та кĕске пулнă мĕн. Водителе больницăна леçеççĕ.

Тепĕр инкек çав кунах, икĕ сехет каярах, Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск çул çинче пулса иртрĕ. Çумăр вăхăтĕнче çулпа ытла пысăк хăвăртлăхпа пыракан çăмăл машина кювета çаврăнса ÿкет. Çамрăк водитель те, унăн икĕ пассажирĕ те, 1996 тата 1993 çулсенче çуралнă хĕрсем, хăрушсăрлăх пиçиххийĕ пуррине манса кайнă – пĕри те унпа çыхăнман пулнă. Çапла вара тĕрлĕ сурансемпе çамрăксене пурне те больницăна ăсатма тивет.

Куратпăр ĕнтĕ, икĕ тĕслĕхĕнче те инкек водитель айăпĕпе тухнă. Вĕсене, паллах, административлă яваплăх кĕтет. Анчах та сăлтавĕ водительсен çул-йĕр çинче ответлăха туйманнинче пулни ыттисене те шухăшлаттармалла.

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**ГИБДД инспекторĕ.**

Редакци почтинчен

# Вулакан ыйтнипе

**"Республикăра тухакан хаçатра Муркаш районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсенчи кĕрхи культура тухăçĕ 12,1 центнерпа танлашнине çырнă. Çак питĕ пĕчĕк кăтарту сăлтавĕ мĕнре-ши?"**

***Ку ыйту çине район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – экономикăпа АПК аталанăвĕн тата муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертÿçи В. АНАНЬЕВ çапла хурав пачĕ:***

– Çулпа çул пĕр пек килмест. Статистика кăтартăвĕ çирĕплетнĕ тăрăх кăçал ытти регионсенчи кĕрхи культура тухăçĕ те пысăк мар.

Район шайĕнче тупăш илесси пĕчĕккине чи малтанах кĕркунне акса хăварнă культура япăх хĕл каçнипе ăнлантармалла. Ял хуçалăх предприятийĕсен уй-хирĕсенче калча вăтамран 45 процент таран пĕтнĕ тата мĕн юлни хавшанă. Çакăнпа вара, паллах, пысăк тухăç илесси те тÿрремĕнех çыхăннă.

Халĕ çурхи культурăсене вырас хĕрÿ тапхăр пырать. Малтанхи кăтартусем тăрăх тухăç япăх марри курăнать. Çапла вара çурхи культура тухăçĕ шучĕпе пĕтĕмĕшле шайлашулăх пуласса шанатпăр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

# Çул-йĕр ÿсĕррисем валли мар

Кăçалхи 7 уйăха тишкерсе республикăра водительсем руль умне ÿсĕрле ларнипе çулсем çинче инкек ытларах тухнине палăртаççĕ. Çав инкексенче 123 çын суранланнă, 4 çын вилнĕ.

Пирĕн районта ку тĕлĕшри лару-тăру малтанхи çулпа танлаштарсан çивĕчленмен-ха. Анчах та иртнĕ 7 уйăхра кăна район территорийĕнче çула тухнă 69 ÿсĕр водителе тытса чарнă, административлă майпа явап тыттарнă.

Полици районти уйрăмĕнче палăртнă тăрăх августăн 17–19-мĕшĕсенче районта иртнĕ «Урă мар водитель» профилактика операцийĕ те пĕртте ытлашши пулман. Сотрудниксем операци вăхăтĕнче палăртса хунă пур ĕçе те пурнăçлама ĕлкĕрнĕ. Асăрхаттару мероприятийĕсем вăхăтĕнче икĕ ÿсĕр водителе тытса чарнă, вĕсем çине административлă протоколсем çырнă.

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Услугăсемпе тивĕçтересси

# ЗАГС çăмăллăхĕсем – электронлă майпа

***Юлашки вăхăтра патшалăх тата муниципаллă услугăсемпе электронлă майпа усă курасси пирки нумай калаçатпăр. Район администрацийĕн ЗАГС пайĕ те хăй паракан хăш-пĕр услугăсемпе электронлă майпа тивĕçтерме пуçларĕ. Кун пирки тĕплĕнрех калаçма ЗАГС пайĕн пуçлăхĕпе Н. КОРНЕЕВĂПА тĕл пултăмăр.***

**– Наталия Валериановна, хальхи вăхăтра сирĕн пай хăш услугăсемпе электронлă майпа тивĕçтерме пултарать?**

– Пирĕн пата электронлă майпа заявлени янипе ача çуралнине, мăшăрланнине е уйрăлнине, çын вилнине çирĕплетекен свидетельствăсене илме май пур. Е тата ача çуралнине çирĕплетекен свидетельствăна (справкăна) тĕрлĕ сăлтава пула тепĕр хут илмелле пулса тухсан.

Каласа хăвармалла, заявление Патшалăх тата муниципаллă услугăсен www.gosuslugi.ru пĕрлехи порталĕнче çырса районти ЗАГС пайне ямалла. Заявлени паракан ĕç-пуç мĕнле тапхăрта пынине пĕлсе тăма пирĕнтен хыпар илес тĕллевпе хăйĕн адресне кăтартмалла.

**– Апла пулсан заявлени çырнă çыннăн ЗАГС пайне хатĕр документа илме пымалла кăна.**

– Çапла. Унччен вара эпир электронлă заявка илнĕ хыççăн кирлĕ акта хатĕрлесе ун патне уведомлени ярса паратпăр. Унта вара шăпах заявкăра кăтартнă кунпа вăхăтра заявка паракана документ парасси пирки пĕлтеретпĕр. Е тата сăлтава палăртса документа хатĕрлесе пама май çукки пирки уведомлени ярса пама пултаратпăр.

Çапла вара заявлени çырса паракан кирлĕ свидетельствăна пирĕн пата хăй палăртнă вăхăта пырса илме пултарать.

**– Наталия Валериановна, маларах асăннă электронлă услугăсенчен мăшăрланасси пирки заявлени çырма кăткăсрах пек туйăнать. Кун пирки кăшт тĕплĕнрех каласа хăварăрха, тархасшăн.**

– Заявка паракансен чи малтанах ЗАГС пайĕн ĕç графикне тишкерсе мăшăрланнине регистрацилеме хăйсене килĕшнĕ кунра никам та йышăнман вăхăта суйласа илмелле. Çавăн пекех заявление хăйсен килсе памалли вăхăта та электронлă майпах суйласа пĕлтермелле. Харпăр хăй килсе заявлени панă хыççăн пĕр уйăхран мăшăрланнине регистрацилетпĕр. Хальхи вăхăтра мăшăрланнине регистрациличчен ЗАГС пайне электронлă майпа икĕ уйăх çурă маларах электронлă заявленипе тухма май пур. Электронлă майпа пĕр-пĕр куна суйласа илсе пирĕн пата хăйсем заявлени çырма пырассине палăртнă хыççăн çав кун пымарĕç пулсан палăртса хунă кунпа вăхăта эпир пăрахăçлатпăр.

Хамăр енчен вара заявлени çырса параканăн (маларах асăннă пур документ тĕлĕшпе те) электронлă адресĕ çине заявление йышăннине, вĕсем суйланă вăхăта ырласа çав куна пыма чĕнсе маларах хыпарлатпăр. Е заявление пурнăçлама май çукки пирки хыпарлани те пулма пултарать.

Аса илтеретпĕр, патшалăх е муниципаллă услугăпа электронлă майпа усă курас тесен малтанах асăннă портала кĕмелле. «Личный кабинет» туса хурса унта ыйтнине çырмалла. Хăш услугăпа усă курассине пурăннă вырăна, пирĕн тĕслĕхре Чăваш Республикине, кăтартса суйламалла. Малалла мĕн тумаллине компьютер хăех кăтартса пырĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА**
**калаçнă.**

# Пĕлтерӳсем. Объявления

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Федотов Александр Иванович, адрес: г. Чебоксары, Московский пр., д.19, корпус № 5, квартира №5.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Дружба». земельный участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:121301 общей площадью 1,31 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:190501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания являются: Первова Мария Николаевна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. К. Данилова, дом 26; Панова Александра Николаевна, проживающая по адресу: Россия, город Кострома Костромской области, по улице Димитрова, дом № 10, кв.№ 42; Пшеничникова Татьяна Николаевна, проживающая по адресу: Россия, город Кострома Костромской области, по улице Маяковского, дом №9, кв. №4.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:190501:1. Адрес (местоположение): Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, общей площадью 1,67 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Николаева Текуса Алексеевна, проживающая по адресу: Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, дер. Сене-Хресчен, ул. Садовая, дом 10.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес (местоположение): Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, общей площадью 1,41 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Юлина Нина Ермолаевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Шомиково, ул. Пошкары, д. 16.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, общей площадью 1,42 га.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 20-20.**

**Приглашаем к участию в долевом строительстве (реконструкции) 12-ти квартирного трехэтажного жилого дома в с. Б. Сундырь, ул. Анисимова.**
**Тел.: 8-967-470-00-38. 1-10.**

**Куплю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши.**
**Тел.: 8-937-373-04-05.**

* * *

**Кăçалхи тырă, улăм сутатпăр.**
**Тел.: 8-937-958-51-14. 1-2.**

* * *

**Срочно продаю комнату в Чебоксарах, в северо-западном районе.Тел.: 8-937-373-08-01.**

* * *

**Срочно продаю трактор Т-25 1992 г. в., в отличном состоянии, за 170 тыс. руб.**
**Тел.: 8-927-669-86-29.**

* * *

**Продаю 1-комн. квартиру в с. Моргауши, 33 кв. м.**
**Тел.: 8-927-667-50-54.**

* * *

**Требуются автослесари в автосервис «Мой мастер» в с. Моргауши. Время работы по скользящему графику с 8-00 ч. до 20-00 ч. Тел.: 8-927-84-74-508.**

* * *

**Хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр.**
**Тел.: 8-905-198-01-46.**

* * *

**Куплю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши. Желательно с индивидуальным отоплением.**
**Тел.: 8-927-855-93-85.**

* * *

**Требуется водитель на 2 месяца в ООО «Энергобаланс» «Чувашэнерго», з/п 10 тыс. руб.**
**Тел.: 89093024502.**

* * *

**Срочно продаю двухкомнатную квартиру в с. Моргауши, с мебелью, 1100000 руб. Торг.**
**Тел.: 8-927-852-21-60.**

* * *

**Продаю березовые дрова свежей рубки.**
**Т.: 8-903-065-58-68. 2-2.**

* * *

**Продаю дом в д. Шептаки в Моргаушском сельском поселении. Участок 42 сот., газовое отопление.**
**Т.: 8-927-855-35-15.**

* * *

**Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Кивĕ Матьăк ялĕнче кил-çурт сутатпăр, çĕрĕ 40 сотка, газ пур, асфальт çул хапха патне çитет. Тел.: 8-906-130-88-13, 8-927-667-81-32.**

* * *

**Продаю дом с участком 42 сот. в Моргаушском районе, с. Тораево, ул. Комбинатская, д. 6.**
**Тел.: 8-917-658-85-23, 8-927-993-84-88.**

* * *

**Сурăх, така туянатăп.**
**Тел.: 8-937-391-68-08. 2-2.**

* * *

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 10-12.**

**КАНЦТОВАРЫ на рынке с. Моргауши**
**Товары для школы и офиса**
**Бланочная продукция, книги и журналы**
**Ксерокопия, ламинирование, тиражирование**
**CD, DVD диски: игры, мультики, музыка, фильмы, софт**
**Оптовые цены в розницу**
**Доставка до офиса бесплатная**
**Заказы принимаются по телефонам: 8(8352)38-00-22, 62-0-22 (местный)**
**Хиты продаж: ручка – 2 руб., тетрадь 12 л – 2,50 руб., бумага «Снегурочка» – 150 руб.**

**Поправка:** В объявлении участника долевой собственности Трофимова Виталия Михайловича, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 5 июля 2008 года в №49 (7580), стр. 4, в последней колонке, 16 абзаце вместо «общей площадью 1,56 га, в том числе 1,34 га пашни» следует читать «1,34 га пашни».

# Римма Трофимовна АЛЕКСЕЕВА



2012 çулхи августăн 19-мĕшĕнче районти пултаруллă доярка, район аталанăвĕшĕн ырми-канми тăрăшнă Римма Трофимовна Алексеева пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ.

Р.Т. Алексеева Муркаш районĕнчи Хачăк Салинче 1950 çулхи майăн 17-мĕшĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Шкулта вĕреннĕ чухнех амăшне пулăшма ĕне фермине çӳренĕ. Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче 8 класс пĕтернĕ хыççăн 1969 çулхи февралĕн 5-мĕшĕнче «Передовик» хуçалăхăн Хачăк Салинчи сĕт-çу ферминче дояркăра ĕçлеме пуçланă. Унăн ĕç кĕнекинче пĕтĕмпе те пĕр йĕрке çеç çырăннă. Мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччен, 2005 çулхи майăн 24-мĕшĕччен пĕр улшăнмасăр фермăра ĕне сунă. Вăл вăхăтра фермăра ĕçлеме çăмăл пулман – пĕтĕм ĕçе алăпа тунă. 1970 çулта кăна ĕнесене аппаратпа сума пуçланă. Римма Трофимовнăна тӳрех 29 ĕне шанса панă. Вăл выльăх-чĕрлĕх пăхакан 1 класлă маçтăр пулнă.

Римма Трофимовна хăйĕн ĕçне çав тери юрататчĕ, ăна питĕ тĕплĕ тăватчĕ, умри тĕллеве пурнăçлатчĕ. Пултаруллăскер районти, республикăри дояркăсен ăмăртăвĕсенче яланах малтисен ретĕнче пынă. Римма Трофимовна хăй пăхакан кашни ĕнерен 4 пинрен пуçласа 6 пине яхăн килограмм сĕт сума пултарнă. Хăйĕн çитĕнĕвĕсемпе лăплансалармастчĕ вăл, çамрăксене те хăйĕн пуян опытне паратчĕ, вĕсене вĕрентсе пыратчĕ.

Римма Трофимовна обществăлла ĕçре те хастарччĕ. Вăл КПСС членĕ пулнă.

Районăн экономика пурнăçĕпе социаллă аталанăвĕнче Р.Т. Алексеевăн тӳпи пысăк. Нумай çул тăрăшуллă ĕçленĕшĕн «1973 çулхи Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» (1973 ç.), «Тăххăрмĕш пилĕк çуллăх ударникĕ» (1976 ç.) паллăсене тивĕçнĕ. 1977 çулта «РСФСР ял хуçалăхĕн Социализмла ăмăрту отличникĕ», 1981 çулта «1980 çулхи Социализмла ăмăрту çĕнтерӳçи» пулса тăнă. Çавăн пекех вăл «Мастер-умелец» (1979 ç.) значока, «Вун пĕрмĕш пилĕк çуллăх ударникĕ» (1984 ç.), «Коммунизмла ĕç ударникĕ» (1985 ç.) паллăсене тивĕçнĕ. Римма Трофимовнăна 1976 çулта «СССР халăх хуçалăхĕн аталанăвĕнче тунă пысăк çитĕнӳсемшĕн» бронза медальпе, икĕ хут Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе (1976, 1980 çулсенче), Ленин орденĕпе (1986 ç.) наградăланă.

Р.Т. Алексеева 2005 çулта «Ĕç ветеранĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Римма Трофимовнăн чун ăшши ĕçтешĕсен валли те, çемйи валли те çитетчĕ. Мăшăрĕпе пĕрле икĕ хĕрне те ял хуçалăх ĕçне юратма вĕрентрĕç.

Р.Т. Алексеевăн район аталанăвĕшĕн тунă ырă ĕçĕсене эпир манмастпăр. Унăн çутă сăнарĕ пирĕн чĕресенче упранĕ.

**Район администрацийĕ, «Передовик» хуçалăх администрацийĕ, пĕрле ĕçленĕ юлташĕсем.**

**Поправка:** В объявлении о согласовании проекта межевания земельного участка Беляева Юрия Евгеньевича, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 4 августа 2012 года в №59 (8020), стр. 8, во 2 колонке вместо «д. 5.» следует читать «д. 55».

**Поправка:** В объявлении участницы долевой собственности Яшкиной Валентины Петровны, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 21 июня 2008 года в №46 (7577), стр. 4, в 1 колонке, 11 абзаце вместо «общей площадью 1,56 га, в том числе 1,34 га пашни» следует читать «1,34 га пашни».

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
КИРПИЧ
ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ
более 500 видов
Тел: (8352) 30-55-10, 50-54-25 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

## Прогноз погоды

| | среда 22 августа | | | | четверг 23 августа | | | | пятница 24 августа | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +10 | +11 | +17 | +13 | +10 | +14 | +19 | +14 | +13 | +15 | +16 | +14 |
| Давление мм | 739 | 740 | 740 | 740 | 740 | 740 | 739 | 738 | 736 | 735 | 735 | 736 |
| Влажность % | 90 | 77 | 62 | 73 | 86 | 76 | 60 | 82 | 97 | 90 | 76 | 86 |
| Ветер м/сек | 6 | 7 | 6 | 4 | 3 | 4 | 3 | 3 | 5 | 5 | 7 | 5 |
| | С-В | С-В | С-В | С | С | С | З | Ю | Ю-З | З | З | З |
| Солнце восход / заход | | 05:39 | 20:11 | | | 05:41 | 20:09 | | | 05:43 | 20:06 | |
| Луна восход / заход | | 12:05 | 21:19 | | | 13:28 | 21:50 | | | 14:45 | 22:31 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Объявления

**Ноябрь уйăхĕнче пăруламалли хура-шурă тынашка сутатăп.**
**Тел.: 8-937-954-02-85.**

* * *

**Мартăн 5-мĕшĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-390-69-79.**

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, песок, гравмассу, щебень, кирпич.**
**Тел.: 8-960-307-41-78. 6-10.**

Принимаем КАРТОФЕЛЬ на крахмал.
Место приемки:
Вурнарский район, д. Кумаши.
По вопросам сдачи картофеля просим обращаться по телефонам:
(8352) 44-11-65, (83538) 2-70-43. 3-6.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**от производителя.**
**Замер. Доставка бесплатно.**
**Низкие цены.**
**Тел.: 8-987-576-65-62. 6-10.**

СХПК «Передовик» глубоко скорбит по поводу безвременной кончины

**АЛЕКСЕЕВОЙ**
**Риммы Трофимовны**,

бывшей передовой доярки, награжденной орденом Ленина, двумя орденами «Трудового Красного Знамени», многими правительственными знаками отличия и Почетными грамотами Российской Федерации, и выражает соболезнование родным и близким.

Коллектив сельскохозяйственного производственного кооператива «Герой» скорбит по поводу безвременной кончины тракториста-машиниста

**ЕРДУКОВА**
**Валерия Васильевича**

и выражает искреннее соболезнование его родным и близким в связи с тяжелой утратой.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учреждениĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 21.08.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4629.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.